Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

15 (7869) № * Юн кун, 2011 çулхи пуш (март) уйăхĕн 2-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Хĕл ăсатăвĕ

## Сывă пул, сивĕ хĕл!

Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн кăçал районта Хĕл ăсатăвĕн уявĕ мартăн 6-мĕшĕнче иртет. Савăнăçлă лару-тăрура ăна Мăн Сĕнтĕрте 10 сехетре, Муркашра 11 сехетре уçăççĕ. Уява пухăннисене район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, вырăнсенчи ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, предприятисемпе организацисен ертӳçисем тата хăнасем саламлаççĕ.

Уяв программи пуян. Кунта художество пултарулăх коллективĕсем хăйсен ташши-юррисемпе савăнтарĕç, тĕрлĕрен спорт ăмăртăвĕсенче вăй виçме май пулĕ, кӳлнĕ çунасен конкурсĕ иртĕ, суту-илӳ тата обществăлла апатлану предприятийĕсем хăйсен продукцине сĕнĕç.

Хыççăн вара уяв итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май пултаруллисемпе хастаррисене парнесем парса чыслĕç.

Сăмах май çав кунах Муркашри Спорт çуртĕнче ĕç çыннисен спартакиади шучĕпе ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учреждениесен тата ял тăрăхĕсен физкультура коллективĕсем хушшинче мини-футболла выляссипе район чемпионачĕ иртет, ăмăрту 11 сехетре пуçланать.

**Хамăр инф.**

Ентешсен çитĕнĕвĕсем

## Вера Соколова – тĕнче рекордсменĕ

Иртнĕ канмалли кунсенче Сочи хулинче Раççейри хăвăрт утакансен хĕллехи чемпионачĕ иртрĕ. Çак ăмăртура Анаткас Апаш хĕрĕ Вера Соколова мала тухма пултарчĕ кăна мар, тĕнче рекордне те çĕнетрĕ. Хĕрарăмсен ӳсĕмĕнче ăмăртса 20 çухрăмлă дистанцие 1 сехет те 25 минут та 08 çеккунт кăтартупа вĕçлесе Олимпиада Ивановăн 2005 çулти кăтартăвне (1:25:41) самаях лайăхлатрĕ.

## Акимов Европăна парăнтарчĕ

Шăмат кун биатлон енĕпе иртнĕ Европа чемпионатĕнче пирĕн ентеш – Рыккакасси каччи – Вячеслав Акимов биатлонист спринт чупăвĕнче ăнăçлă ăмăртнă. Вăл çирĕппĕнех çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçсе «ылтăн» çĕнсе илнĕ.

Тепĕр кунхи преследовани стартĕнче хăйĕн хыççăн пыракан спортсменран 40 çеккунт маларах финиша çитнĕ. Çапла вара çамрăк биатлонист Европăри юниорсен чемпионатĕнче икĕ «ылтăн» ĕçлесе илнĕ. Кунсăр пуçне унăн халĕ арçынсен эстафетинчи «кĕмĕлĕ» те пур.

**Хамăр инф.**

# Ĕçре тупнă телей

Ыттисемшĕн ырă тĕслĕх



***Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн Çатракассинчи сĕт фермин коллективĕ 2010 çул кăтартăвĕсемпе «2010 çулхи чи лайăх сĕт ферми» вымпела тивĕçрĕ.***

***В. Николаев ертсе пыракан ферма коллективĕ çулталăк хушшинче пĕтĕмпе 1161,1 тонна е пĕр ĕне пуçне вăтамран 5805 килограмм сĕт сунă. Сăн ӳкерчĕкре (сулахайран сылтăмалла) машинăпа ĕне сăвакан Ф. Антонова, Н. Орлова, Н. Михайлова, Г. Иванова операторсене, 21 çул техник-осеменаторта вăй хуракан Ф. Максимовăна, Т. Филиппова дояркăна тата хуçалăхра 19 çул тĕп зоотехникра ĕçлекен Г. Васильевăна куратăр. Хуçалăх экономикин аталанăвĕнче кашниех хăйĕн тӳпине курать.***

***А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.***

# Хаксене пăхсах тăраççĕ

Ĕçлĕ лару

***Çак кунсенче социаллă пĕлтерĕшлĕ тавар хакĕсене пăхса тĕрĕслесе тăракан комиссин черетлĕ ĕçлĕ ларăвĕ иртрĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçрĕ, ку тĕлĕшри пĕтĕмĕшле лару-тăрупа паллаштарчĕ. Ларăва потребкоопераци суту-илӳ предприятийĕсен, пĕчĕк тата вăтам предприятисен ертӳçисем, рынок управляющийĕ, уйрăм предпринимательсем, ку енĕпе ответлă ытти ĕçченсем пухăнчĕç.***

Чи малтанах пухăннисене район администрацийĕн экономика пайĕн ертӳçи Э.И.Симакова суту-илӳ предприятийĕсемпе точкисенчи социаллă пĕлтерĕшлĕ тавар хакĕсемпе паллаштарчĕ, ытти тăрăхрисемпе танлаштарчĕ. Тавар туянакан ыйтăвĕсене тивĕçтерме, хаксене май пур таран пĕр шайра тытса тăма тăрăшмаллине палăртрĕ.

Чăваш Республикинче пĕр килограмм çăкăр хакĕ вăтамран 21,34 тенкĕпе (пĕр буханка 300-350 грамм таять) танлашать, районта 21,10 тенкĕпе сутаççĕ. Çĕр улмин пĕр килограмне Чăваш Енре 37,69 тенкĕпе, районта 35 тенкĕпе туянма пулать. Çу шайĕ 3,2 процентлă сĕте (1 литр) Чăваш Енре 32,24 тенкĕпе, пирĕн районта 30,10 тенкĕпе илме пулать. Сахăр песукĕн хакĕ (1 кг) пĕр майлах – 43 тенкĕ. Чи пĕлтерĕшлĕ таварсен хакне антимонополи служби контроллесе тăрать.

Çавăн пекех Роспотребнадзор управленийĕн Чăваш Республикинчи представителĕ С.Н.Михайлова, территори уйрăмĕн тĕп эксперт специалисчĕ Г.Г.Воробьева апат-çимĕç сутас ĕçри требованисем çинче чарăнса тăчĕç, тавар туянакан прависене хӳтĕлесси пирки каларĕç.

Суту-илӳ ĕçĕнчи хăш-пĕр самантсем çинче ытларах чарăнчĕç. Хамăр патра туса кăларакан продукци пахалăхне ӳстермеллине, упаковка çине Чăваш наци символикин элеменчĕсене кĕртмеллине, хатĕр продукци куравне йĕркелемеллине палăртрĕç тата ытти хăш-пĕр самантсем çинче чарăнса тăчĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**.

# Активлă хутшăнар, тивĕçлисемшĕн сасăлар!

Мартăн 13-мĕшĕнче – иккĕмĕш хут иртterekен суйлав

***Астăватăр ĕнтĕ, иртнĕ çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавĕ иртрĕ. Ун чухне эпир ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, депутатсен районти тата ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен депутачĕсене суйларăмăр. Шел пулин те уйрăм округсемпе суйлав иртмен тесе йышăннă. Çавăнпа та кăçалхи мартăн 13-мĕшĕнче вĕсенче суйлав тепĕр хут иртет. Унччен вара шутлă кунсем кăна юлаççĕ. Çавăнпа та çитес суйлав ыйтăвĕсемпе тĕплĕнрех эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне, йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхне, территори суйлав комиссийĕн председательне Лилия Юрьевна ТАРАСОВĂНА каласа пама ыйтрăм.***

**– Лилия Юрьевна, мĕнпе çыхăннăха суйлава иккĕмĕш хут ирттересси?**

– Çак процедура «Раççей Федерацийĕн гражданĕсен суйлав правин тата референдума хутшăнмалли правин тĕп гарантийĕсем çинчен» Федераллă саккунпа тата Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене суйласси çинчен» Саккунпа килĕшӳллĕн пулса иртет.

Акă саккунпа килĕшӳллĕн ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама кандидатсем бюллетеньре иккĕрен кая мар кирлĕ. Оринин ял тăрăхĕпе ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама тăратнă кандидатсенчен сасăлав кунĕччен (2010 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕ) хăйсен кандидатурисене каялла илнĕрен пĕр кандидат кăна юлчĕ. Çавна май ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама май килмерĕ. Мартăн 13-мĕшĕнче кун пек ыйту пулмасть тесе шутлатăп. Мĕншĕн тесен паянхи куна Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама тăратнă кандидатсем 6 çын. Мартăн 13-мĕшĕнчи суйлавра хăшĕ вĕсенчен ытларах сасă пухать, вăл ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулать те. Сăмах май ял тăрăхĕн пуçлăхне 21-мĕш Оринин, 22-мĕш Атапай, 23-мĕш Пăсăрман, 24-мĕш Мулкачкасси суйлав участокĕсене кĕрекен ялсенчи суйлавçăсен сасăласа суйламалла пулать.

Кунпа пĕрлех пĕр мандатлă 3-мĕш Уйкас Янасал суйлав округĕнчи 4-мĕш Ваçкасси суйлав участокĕпе, 10-мĕш Мăн Сĕнтĕр суйлав округĕнчи 6-мĕш Мăн Тутаркас суйлав участокĕпе, 2-мĕш Ильинка суйлав округĕнчи 10-мĕш Тренккă суйлав участокĕпе, 7-мĕш Катькас суйлав округĕнчи 15-мĕш Калайкасси суйлав участокĕпе те суйлав иртĕ. Кунти суйлавçăсем вырăнти депутатсене суйлĕç.

Çавна каласа хăварасшăн. Депутатсен Пухăвĕсен депутачĕсене суйланă чухне бюллетеньре пĕршер кандидат пулсан та çитет. Анчах та услови – уншăн сасăланисен хисепĕ хирĕç сасăланисенчен ытларах пулмалла. Октябрьти суйлавра вара тепĕр майлă пулса тухрĕ. Бюллетеньсенче пĕрер кандидат пулнă, пĕри те вĕсенчен кирлĕ чухлĕ сасă пухайман. Паллă ĕнтĕ, икĕ кандидат пулнă пулсан ытларах сасă пухаканни депутата суйланатчĕ. Ку хутĕнче асăннă округсемпе тăратнă кандидатсем икшер-виçшер çын.

Çапла вара мартăн 13-мĕшĕнче Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхне тата вырăнти тăватă депутата суйламалла пулĕ.

**– Хатĕрленӳ ĕçĕсем пирки мĕн калама пултаратăр?**

– Ку тĕлĕшпе тĕп ĕçсене вĕçленĕ ĕнтĕ. Суйлавçăсен списокĕсене пăхса тухса çирĕплетнĕ, бюллетеньсене янтăланă, сасăлав валли уйăрнă вырăнсем суйлавçăсене йышăнма хатĕр. Пысăк пĕлтерĕшлĕ çак ĕçе тивĕçлĕ шайра туса ирттерессипе пăхса хуман ыйту сиксе тухма кирлĕ мар тесе шутлатăп.

**– Юлашки ыйту. Çӳлте асăннă суйлав участокĕсенчи суйлавçăсене чĕнсе мĕн калас тетĕр?**

– Маншăн пулсан ик айкки те тăвайкки тесе суйлава хутшăнассинчен никамăн та пăрăнса юлма кирлĕ мар. Суйлава хутшăнса эпир хамăрăн малашлăхшăн сасăлатпăр. Ял çыннисем – суйлавçăсем çакна тĕрĕс ăнланасса шанатăп.

Суйлав ирттерессин йĕркисем унччenхисемех. Суйлав участокĕсем ирхи 8 сехетрен тытăнса 20 сехетчен ĕçлеççĕ. Суйлава пыраканăн пĕрле паспорт пулмалла. Енчен ку е вăл сăлтавпа суйлавçă участока пыма пултараймасть пулсан унăн кун пирки пĕлтерес пулать. Ăна киле пырса сасăлаттарĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

Саламлатпăр

Юратнă çыннăмăрсене, аттепе аннене, хăйматлăх аттепе аннене, кумсене – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Елена Петровнăпа Юрий Михайлович МАКСИМОВСЕНЕ** – иксĕр пĕрле шăкăл-шăкăл килĕштерсе пурăнни 25 çул çитнĕ ятпа саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, иксĕлми вăй-хал, çирĕп сывлăх сунатпăр. Эпир сире питĕ юрататпăр, юнашар пурришĕн савăнатпăр. Сĕтел çинчен çăкăр-тăвар ан татăлтăр, кĕрекĕр ялан тулли те пуян пултăр. Хисеплĕ аттепе анне, паян юратнă пек ыран та юратăр, кĕмĕл туй анчах мар, ылтăн туй та кĕрлетĕр.

Япăх çынсем мар эсир,
Сире шанаççĕ кумсем пулма,
Суйлаççĕ çамрăк мăшăрсем
Туйра хăйматлăхсем пулма.
Юлашкинчен мĕн калар,
Ыр кун-çул, телей сунар,
Ырри çеç пултăр çынсенчен,
Хисеп пултăр тăвансенчен,
Пурнăçланччăр ĕмĕтсем,
Çавăн пекех шухăшсем.
Ĕмĕр туслă пурăнар,
Тăвансемпе савăнар,
Пĕрле ларса юр-юрлар.



**Саламлаканĕсем: Коля, Максим ывăлĕсем, хăйматлăх хĕрĕсемпе кĕрĕвĕсем, Любимовсем, Александровсем, Садовниковсем, кумсем, Харитоновсемпе Поликарповсем тата мĕн пур тăванĕ.**



Юратнă аннене – Тереç ялĕнче пурăнакан **Мария Владимировна СИДЮШКИНĂНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр. Кун-çулу вăрăм та такăр пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр. Ачусемпе, мăнукусемпе тата тăванусемпе ялан савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсем, ывăлĕсем, кĕрӳшĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, хăтисемпе тăхлачисем.**



Чи юратнă çыннăмăра – Якаткасси ялĕнче пурăнакан **Николай Александрович ИГНАТЬЕВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ырă таса кăмăлна ĕмĕрлĕхех эс упра, ачусен ырлăхне, телейне курса савăнмалла пултăр. Ĕмĕрӳ вăрăм пултăр, сывлăху çирĕп тăтăр.

**Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕ, ачисем, хăйматлăхĕсем, тăванĕсем, пускил, ял-йыш.**

Ялти пурнăç ыйтăвĕсемпе

# Çĕр ыйтăвĕ тавлашу ан çураттăр

**Малашлăх тата пуласлăх çамрăксенче тенине час-часах илтме пулать. Эпир ялта çуралнă, унтах пурăнатпăр тата ĕçлетпĕр. Вăхăтăн хăйĕн саккунĕ: пĕрисем килеççĕ, теприсем каяççĕ.**

**Халĕ мĕн асăрхатăн-ха. Ялсенче ытларах чухне çулланнă, ватăлнă çынсене тĕл пулма тивет. Ял хуçалăх производствинчи ĕçсенче çамрăксен йышĕ те пысăк мар. Енчен те каччăсемпе хĕрсене тăван ялта хăварас енĕпе тимлĕх уйăрмасан ăçта çитсе тăрăпăр-ши? Кун пирки вырăнти чиновниксен хальтерех шухăшламалла. Халĕ шкулсенчен вĕренсе тухакан çамрăксем валли аслă вĕренӳ заведенийĕсенче ятарлă тарăн пĕлӳ илнĕ хыççăн тăван ял хуçалăхне ĕçлеме килме пур енлĕ условисем туса памалла, вĕсене хавхалантармалла.**

Ялта юлма кăмăл тунă яшсене вара акă мĕн-мĕн канăç памасть тата. Чи малтанах – пурăнмалли çурт-йĕр çавăрасси. Калăпăр, шкултан вĕренсе тухнă хыççăн çамрăк çара службăна каять. Унтан таврăнсан вăл çемье çавăрасшăн тейĕпĕр. Анчах та йышлă çемьере çуралса ӳснĕ пулсан вĕсен çĕнĕ çĕре уйрăлса тухса пурăнма кил-çурт çавăрма тивет.

Çумăр хыççăн кăмпа шăтса тухса хăвăрт ӳсет. Шел те, кил-çурта çапла тума май çук. Строительство материалĕсен хакĕ самаях пысăк. Кил-çурт çавăрма вара укçа-тенкĕ чылай кирлĕ. Ялта пурăнма кăмăл тунă каччăсенчен хăшĕсем тĕрлĕ сăлтавсене пула ыттисем пек укçа-тенкĕ ĕçлесе пухма аякка нумай вăхăтлăх тухса каяймаççĕ вĕт-ха. Кайнисем те тепĕр чухне каялла пуш кĕсьепех таврăнаççĕ. Ырă пурнăçран-и çакă вара?

Кил-çурт çавăраканшăн хальлĕхе татса паман ыйтусем те пайтах. Калăпăр, çурт лартмалла. Анчах та ăна çавăрма, хушма хуçалăха аталантарма кăмăл тăвакансем валли чăх ури пусмалăх та çĕр лаптăкĕ çук. Ăна илес тесен те сахал мар «тар тăкăнать», кăмăл пусăрăнать, хуçăлать.

«Ан кулян, аукцион ирттереççĕ те, укçа-тенкĕ ытларах тӳлетĕн те çĕрлĕ пулатăн»,– теме пăхаççĕ хăш-пĕр чиновниксем. Вăл çапла пулĕ те, анчах та тин кăна шкултан вĕренсе тухнă, унтан хĕсметре службăра тăнă каччăн укçи-тенки ăçтан пултăрха? Çакă тĕлĕнтерет мана.

Каччăсемпе хĕрсем тăван кĕтесрен ан сивĕнччĕр тесен проблемăллă çак çивĕч ыйтусене йĕркеллĕ татса пама вырăнсенче мелсем шырамаллах.

Çĕнĕ 2011 çул умĕн Раççей Президенчĕ Д. Медведев телеинтервьюра ахальтен мар ĕнтĕ çĕр-шывра çĕр политикине улăштарса çĕнĕлĕхсем кĕртесси пирки те тĕплĕн чарăнчĕ. Ку енĕпе тĕслĕхсем те илсе кăтартрĕ. Сăмахран, Иваново облаçĕнче ялта пурăнма кил-çурт çавăрма кăмăл тунисене çĕр участокĕ тӳлевсĕр йĕркепех уйăрса параççĕ. Çак тĕслĕх кунти пуçлăхсем ялтисемшĕн тăрăшнине тӳрремĕнех çирĕплетсе парать мар-и? Çакăн пек тума хамăр патра та мелсем шырамалла. Ялта кил-çурт çавăрма тата хушма хуçалăх валли çĕр участокĕ çителĕклĕ чухлĕ тӳлевсĕр уйăрса парасси пирки каланине çĕр çинчен калакан саккуна кĕртмеллех.

Хамăн сăмахсене Д. Медведев Президент телеинтервьюра каланă сăмахсемпе чăвашла куçармасăрах вĕçлеме кăмăл пур. «В принципе нужно думать о том, чтобы наши люди могли в упрощенном порядке получать землю не только для сельхозработ, не только для того, чтобы вести подсобное хозяйство, а просто для того, чтобы обустраиваться, чтобы жить... Мне кажется, что нам нужно в каком-то плане поменять даже ментальность, потому что нельзя все время кучковаться, нужно стараться создавать нормальные условия для жизни. И здесь очень многое будет зависеть от того, насколько эта политика правильно будет реализована в регионах»,– терĕ вăл. Пĕтĕмпех тĕрĕс сăмахсем. Пурнăç кустăрми малаллах çаврăнать. Пирĕн районта та кил-çурт лартма кăмăл тăвакансене çĕрпе тивĕçтерес енĕпе ыррине çеç кĕтетпĕр.

**А. ШАРИКОВ, Раççей журналисчĕсен союзĕн членĕ.**

Тереç ялĕ.

Ял урамĕсенче йĕрке пултăр

# Тузика та, Кампура та сăнчăрта тытмалла

Пĕррехинче çапла Муркашра общежити (унччен гостиница пулнă) умĕпе пыратăп. Çурăмран такам тĕкнипе каялла çаврăнтăм. Палланă юлташ пулĕ-ха тетĕп. Çаврăнтăм та, ман умра - пăру пек овчарка. Сĕлекине сирпĕтсе мана вĕрет, шăлĕсемпе пĕр самантра туртса çурма хатĕр. Кайран пĕлтĕм, хайхи йытă юнашар çуртри балкон айне çăвăрланă пулнă.

Çапла, ял урамĕсенче йытăсем чупнине хăнăхрăмăр. Анчах вĕсен ушкăнне тĕл пулсан çӳç-пуç вирелле тăрать. Инкек пуласси те инçе мар. Ял йыттисем выльăх-чĕрлĕхе çурса тăкни районта пĕрре мар пулнă. Çынна çыртнă тĕслĕхсем те çук мар. Çавăнпа ĕнтĕ йытта сăнчăрта тытма хушаççĕ. Урама илсе тухас пулсан ăна ятарлă çăварлăх тăхăнтартмалла. Ку енĕпе саккуна пăсакансен вара явап тытма тивет.

Февралĕн 18-мĕшĕнче район администрацийĕ çумĕнчи административлă комисси ĕçлерĕ. Ку хутĕнче йыттисене кăкарман граждансене ответ тыттарас ыйтăва пăхса тухрĕç.

Тӳрех палăртатпăр, административлă право йĕркине пăсни çинчен калакан республикăри административлă кодексăн 15 статйин 1-мĕш пайĕ çакăн пек айăплав палăртать: 500 тенкĕрен пуçласа 1000 тенкĕ таран штраф. Çапла, йытта урама кăларса яракана 500 тенкĕрен пуçласа 1000 тенкĕ таран штраф кĕтет. Асăрхаттармалла тени çук. Çĕньял Очăкасси ялĕнчи Г. Анисимовăна та, Г. Федоровăна та комисси 500-шер тенкĕлĕх штраф пачĕ.

Ку ларура комисси Шупуç, Тренккă, Сыпай, Милютакасси, Очăкасси, Мемеккасси, Тяпакасси, Мăн Сĕнтĕр ялĕсенчи 13 граждана явап тыттарчĕ, кашнинех 500-шер тенкĕ штраф хучĕ.

– Административлă комисси тĕллевĕ çынсене штрафласси мар, – тет унăн ертӳçи В. Никитин, – ял урамĕсенче йĕрке тăвасси. Çав шутра йытăсене чупма чарассипе те. Милици ĕçченĕсем те ку енĕпе тимлĕхе çухатмаççĕ. Апла пулсан тăватă ураллă туссене сăнчăртах тытар. Капла пуриншĕн те лайăхрах.

**А. ИВАНОВ.**

Прокуратурăран

# Çынлăха çухатсан

**Çĕр çине çын хăнана кăна килет теççĕ халăхра. Апла пулсан ăна тĕрĕс те тĕллевлĕ пурăнса ирттерме, пурнăçа хаклама тăрăшмалла пек туйăнать. Пурнăç чăнлăхĕ вара урăхларах килсе тухать: пӳтсĕр çынсене пула пĕрин пурнăçĕ вăхăтсăр татăлать, тепри хăй пурнăçĕ çине пысăк хĕрес лартса ĕмĕрлĕхех «кирпĕч шутлама» кĕрсе ларать. Акă февралĕн 12-мĕшĕнче районта хăрушă хыпар сарăлчĕ, пурне те хумхантарчĕ.**

**Пулса иртнĕ преступлени пирки районсем хушшинчи Етĕрнери следстви пайĕн следователĕ В.В. Долгов çапла пĕлтерчĕ:**

– Шурча ялĕнче çуралса ӳснĕ яш ытла та пӳтсĕр ĕç туса хунă. Вăл Ярапайкассинчи пĕр хуçалăха кайнă. 76 çулхи ватăна шеллемен, ăна тапăннă, хĕненĕ: кăкăрĕнчен, питĕнчен темиçе хутчен çапнă хыççăн урайне ӳкернĕ, хăйĕн тискер ĕçне малалла тăснă. Çынлăха çухатнă яш ватă çынна пăвса вĕлернĕ.

Çавăн пекех ăна ытти преступленисемшĕн те айăплаççĕ. Шупашкар хулин Мускав районĕнчи пĕр хĕрарăмăн пурнăçне татнă тата Муркаш салинче вăрланă чылай тĕслĕхе унпа çыхăнтараççĕ. Халĕ çакă тата ытти тĕлĕшпе следстви ĕçĕсем пыраççĕ.

Çавăн пекех çак кунсенче пĕр уголовнăй ĕçе пĕтĕмлетме май килчĕ. Маларах Йуçкасси ял тăрăхне кĕрекен Çĕмĕрткасси ялĕнчи 19 çулхи яшăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнăччĕ, ăна тискеррĕн вĕлернĕччĕ. Ку преступление çак ял тăрăхĕнчи Кив Матьăк ялĕнче 1982 çулта çуралнă çын тунă тесе пĕтĕмлетме май килчĕ. Çын вĕлерекене 15 çуллăх ирĕкрен хăтармалла турĕç. Çак хăрушă преступлени сăлтавĕ эрехпе çыхăннă. Маларах вара вĕсене ответлă ĕçченсем пĕрре мар ку енĕпе асăрхаттарнă, анчах та эрех туйăмĕ вăйлăрах пулнă. Çак кунхине те эрехпе айкашнă. Наркăмăшпа минресе çитнĕскерĕн тискер кайăк туйăмĕ çуралнă, алла çĕçĕ тытса тепĕр çынна касса-тирсе вĕлернĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

# Пурнăç çулĕпе утма хăнăхаççĕ

Юбилей

2011 çулхи октябрь уйăхĕнче Орининти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул хăйĕн 150 çулхи юбилейне паллă тума хатĕрленет. Çав тапхăрта çĕршер те çĕршер вĕренекен кунта пĕлӳ илсе пурнăçăн аслă çулĕ çине тухнă. Кунти шкул коллективĕ те ачасене тарăн та тĕрĕс воспитани парас, вĕсене пурăнма вĕрентес тесе питĕ тимлет. Ахальтен мар ĕнтĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн ятран паракан стипендине тивĕçнисем хушшинче Оринин шкулĕн вĕренекенĕсем те пур. Кăçал Настя Дмитриева (3-мĕш класс) çак чыса тивĕçрĕ.

Лайăх вĕренекенсене шкул дирекцийĕ те хавхалантарма тăрăшать. Кашни çур çул пĕтĕмлетĕвĕпе кĕçĕн, вăтам тата аслă классенче пĕлӳ пухакансене пĕрер ачана шкул дирекцийĕ ятарлă стипендипе тивĕçтерет. Кăçал ку стипендие Мария Угольниковăна (3-мĕш класс), Диана Федоровăна (7-мĕш класс), Анжела Блиновăна (9-мĕш класс) пачĕç.

Учительсен пултарулăхĕ пысăк. Çакна вара Оринин шкулĕнчен тĕрлĕ çулсенче вĕренсе тухса палăрма ĕлкĕрнĕ студентсемпе çамрăксем тата ыттисем те çирĕплетсе параççĕ. Вĕсем хăйсен пултарулăхне çӳллĕ шайра тытаççĕ. Паллă ĕнтĕ, вĕрентекенсен тӳпи кунта пĕчĕк мар.

ЧР Президенчĕн çулсерен паракан стипендине кунта тĕрлĕ çулсенче пĕтĕмпе 7 вĕренекен илме пултарнă. Кусем вĕсем Елена Сергеевна Алексеева (Оринин шкулĕнче 11-мĕш класра вĕренет), Юлия Ивановна Ананьева (Оринин шкулĕнче 8-мĕш класчен вĕреннĕ, халĕ Муркаш шкулĕнче 11-мĕш класра вĕренет, «Родина» çарпа патриотика клубĕн членĕ), Татьяна Александровна Волкова (Муркашри тĕп библиотекăн уйрăм ертӳçи), Ольга Владиславовна Киршева (хĕр чухнехи хушамачĕ Налимова, Муркашри çамрăк техниксен станцийĕн хушма пĕлӳ паракан педагогĕ), Елена Святославовна Павлова («Оринино» хуçалăх бухгалтерĕ), Людмила Владимировна Филиппова (Муркашри ачасемпе çамрăксен В. Егорова ячĕпе хисепленекен спорт шкулĕн воспитанникĕ), Наталья Сергеевна Каликова (Чăваш патшалăх культурăпа искусство институтĕнче 4-мĕш курсра вĕренет).

Чăннипех те пултаруллă та маттур эсир, Оринин шкулĕнчен вĕренсе тухнă яш-кĕрĕм! Эпир сирĕнпе чăннипех мухтанма пултаратпăр.

**Ирина СКВОРЦОВА.**

13 марта - повторные выборы

### Кандидаты в депутаты Собрания депутатов Большесундырского сельского поселения

**по Большетатаркасинскому одномандатному избирательному округу №10**

ЛЕОНТЬЕВ ЮРИЙ ГЕННАДЬЕВИЧ

29 июня 1978 года рождения;образование: высшее профессиональное; место работы: индивидуальный предприниматель;место жительства: Чувашская Республика, г.Чебоксары; выдвинут Чувашским региональным отделением политической партии «Либерально - демократическая партия России»;член Чувашского регионального отделения политической партии «Либерально-демократическая партия России».

ЯШМОЛКИН ВЛАДИМИР ТРИФОНОВИЧ

23 января 1963 года рождения; образование: начальное профессиональное, место работы: МОУ «Калайкасинская СОШ им. А.Г.Николаева» Моргаушского района, газооператор; место жительства: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Малые Татаркасы; выдвинут Моргаушским районным Чувашской Республики местным отделением Всероссийской политической партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ»; член Всероссийской политической партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ».

### Кандидаты в депутаты Собрания депутатов Ильинского сельского поселения

**по Куськинскому одномандатному избирательному округу №2**

БЫЧКОВ МИХАИЛ АНАНЬЕВИЧ

10 октября 1959 года рождения; образование: высшее профессиональное; место работы: ООО «Юман», генеральный директор; место жительства: Чувашская Республика, Моргаушский район, выселок Васильевка; выдвинут в порядке самовыдвижения.

ПРОКОПЬЕВ АНДРЕЙ ПЕТРОВИЧ

26 ноября 1983 года рождения; образование: среднее; место работы: ООО «Топливная энергетическая компания», директор; место жительства: Чувашская Республика, г.Чебоксары; выдвинут Чувашским региональным отделением политической партии «Либерально - демократическая партия России»; член Чувашского регионального отделения политической партии «Либерально-демократическая партия России».

ЧЕРНОВ АЛЕКСАНДР ЮРЬЕВИЧ

30 января 1971 года рождения; образование: среднее; место работы: ООО «Хлебороб» Моргаушского района, рабочий; место жительства: Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Тябакасы; выдвинут Моргаушским районным Чувашской Республики местным отделением Всероссийской политической партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ»; член Всероссийской политической партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ».

### Кандидаты в депутаты Собрания депутатов Александровского сельского поселения

**по Паймурзинскому одномандатному избирательному округу №3**

АНДРЕЕВ АЛЕКСАНДР ВАЛЕРЬЕВИЧ

19 января 1977 года рождения; образование: высшее профессиональное; место работы: крестьянское (фермерское) хозяйство, глава; место жительства: Чувашская Республика, г.Чебоксары; выдвинут Чувашским региональным отделением политической партии «Либерально - демократическая партия России»; член Чувашского регионального отделения политической партии «Либерально-демократическая партия России».

ЕГОРОВ ВИКТОР ИВАНОВИЧ

9 мая 1972 года рождения, образование: высшее профессиональное; место работы: СХПК им. Ильича Моргаушского района, инженер по охране труда и технике безопасности; место жительства: Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Паймурзино; выдвинут Моргаушским районным Чувашской Республики местным отделением Всероссийской политической партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ»; член Всероссийской политической партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ».

ПЕТРОВ НИКОЛАЙ ИЛЬИЧ

15 июля 1950 года рождения; образование: среднее; место работы: пенсионер; место жительства: Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Паймурзино; выдвинут в порядке самовыдвижения.

### Кандидаты в депутаты Собрания депутатов Кадикасинского сельского поселения

**по Молодежному одномандатному избирательному округу №7**

ЕВДОКИМОВА АЛЬБИНА СИДОРОВНА

31 июля 1954 года рождения; образование: среднее; место работы: пенсионер; место жительства: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Калайкасы; выдвинута Моргаушским районным местным отделением Партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ».

ПЕТРОВ АЛЕКСЕЙ НИКОЛАЕВИЧ

4 ноября 1980 года рождения; образование: высшее профессиональное, место работы: ЗАО «Стройтранссервис», главный инженер; место жительства: Чувашская Республика, г.Чебоксары; выдвинут Чувашским региональным отделением политической партии «Либерально - демократическая партия России»; член Чувашского регионального отделения политической партии «Либерально-демократическая партия России».

### Кандидаты на должность главы Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

БЛИНОВ АНДРЕЙ ГЕРМАНОВИЧ

26 февраля 1982 года рождения; образование: среднее специальное; место работы: временно не работает; место жительства: Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Чамыши; выдвинут в порядке самовыдвижения;доход за 2010 год составил 0 руб.; имеет в собственности земельный участок в д.Чамыши площадью 4000 кв.м, жилой дом в д.Басурманы площадью 15,6 кв.м.; транспортное средство Фольксваген Пассат 1989 г.в.

ВОЛКОВ АЛЕКСАНДР СЕРГЕЕВИЧ

20 августа 1955 года рождения; образование: среднее специальное; место работы: единая дежурно-диспетчерская служба Моргаушского района, дежурный-диспетчер; место жительства: Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Чамыши; выдвинут Моргаушским районным Чувашской Республики местным отделением Всероссийской политической партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ»; член Всероссийской политической партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ»; доход за 2010 год составил 130000 руб., источник выплаты дохода - территориальный орган федеральной службы государственной статистики по ЧР-Чувашии в Моргаушском районе; имеет в собственности земельный участок в д.Чамыши площадью 4000 кв.м, жилой дом в д.Чамыши площадью 87 кв.м.; транспортное средство трактор с прицепом МТЗ-80 1982 г.в.

ВОЛКОВ СЕРГЕЙ ГЕННАДЬЕВИЧ

1 сентября 1972 года рождения; образование: среднее; место работы: временно не работает; место жительства: Чувашская Республика, Моргаушский район, с.Оточево; выдвинут в порядке самовыдвижения;доход за 2010 год составил 0 руб.; имеет в собственности транспортные средства Фольксваген транспортер 2000 г.в., трактор Т-25 1992 г.в.

ВОРОБЬЕВ АЛЕКСЕЙ МИХАЙЛОВИЧ

6 января 1966 года рождения; образование: начальное профессиональное; место работы: ООО «Арман», генеральный директор, место жительства: Чувашская Республика, г.Чебоксары; выдвинут в порядке самовыдвижения; доход за 2010 год составил 120000 руб., источник выплаты дохода – ООО «Арман»; имеет в собственности земельный участок в д.Лапкасы площадью 1900 кв.м, земельную долю площадью 5,8 га, жилой дом в д.Лапкасы площадью 235,66 кв.м., квартиру в г.Чебоксары площадью 38,2 кв.м, гараж в д.Лапкасы площадью 80 кв.м.

ПРОКОПЬЕВ АНДРЕЙ ПЕТРОВИЧ

26 ноября 1983 года рождения; образование: среднее; место работы: ООО «Топливная энергетическая компания», директор; место жительства: Чувашская Республика, г.Чебоксары; выдвинут Чувашским региональным отделением политической партии «Либерально - демократическая партия России»; член Чувашского регионального отделения политической партии «Либерально-демократическая партия России»; доход за 2010 год составил 122733,38 руб., источники выплаты дохода - ООО «Продсервис» (45733,38 руб.), ООО «Пироснаб-Поволжье» (17000 руб.), ООО «ТЭК» (60000 руб.), имеет в собственности гараж в г.Чебоксары, площадью 15 кв.м, транспортные средства ВАЗ-21144 2007 г.в, Фольксваген Пассат 1988 г.в.; денежные средства, находящиеся на счетах в банке Чувашского ОСБ №8613 – 68768,95 руб.

СУРИКОВ АЛЕКСАНДР СЕРГЕЕВИЧ

5 декабря 1974 года рождения; образование: высшее профессиональное; место работы: Орининское сельское поселение, глава;
место жительства: Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Сендимир; выдвинут в порядке самовыдвижения;доход за 2010 год составил 162000 руб., источник выплаты дохода– администрация Орининского сельского поселения; имеет в собственности земельный участок в д.Сендимир площадью 4000 кв.м, жилой дом в д.Сендимир площадью 150 кв.м.

# Сумлă ята тивĕçрĕç

## Районта малта пыракан ферма ĕçченĕсене чысларĕç

***Çын ĕçпе илемлĕ, тет ваттисен сăмахĕ. Çак чăнлăх пурнăçра тăтăшах ума тухса пырать пулсан та нумайăшĕ ăна тивĕçлипе хакламасть. Ĕçлекен тăрăшулăхне вăл паян кăна кирлĕ пек йышăнать. Пĕрин мал туртăмлă ĕçĕн тĕслĕхĕ çинче ыттисене воспитани парассине иккĕмĕш вырăна хăвараççĕ, ĕçшĕн хаклассине юриех «манаççĕ». Кайран вара чавса çывăх та çыртма çук... Район администрацийĕпе ял хуçалăх пайĕ çулленех иртнĕ ял хуçалăх çулĕнчи ĕççене тишкерсе обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсене тивĕçлипе чысласси кун йĕркинче тытни вара Муркаш тăрăхĕнче экономика аталанăвĕшĕн тăрăшакан пирки самантлăха та манманни пирки калать. Кăçал çак пĕтĕмлетӳ нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕнче районти Культура çуртĕнче пулчĕ.***



– Çĕннине тăтăш вĕренмеллине, ыранхи куна пăхса ĕçлемеллине, малашлăхшăн тăрăшмаллине пирĕнтен пурнăç ыйтать. Çакна эпир хамăр çинче туятпăр. Хамăр районăн, Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн экономикине малалла уттарасси – пĕрлехи тивĕç, – терĕ анлă канашлăва пуçарса район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов.

Юлашки çулсенче Раççей Федерацийĕн Президенчĕ палăртнă «Агропромышленность комплексне аталантарасси» приоритетлă наци проекчĕ ял хуçалăх предприятийĕсене, ялта пурăнакансене çĕнĕ аталану çулне уçса ĕçлеме вăй пачĕ. Çĕнĕлĕхсем ку таранччен пурнăçланă ĕçсем çине çĕнĕлле пăхма хистенине, кашнин умнех çĕнĕ тĕллевсем лартса çакна валли урăхла ĕç мелĕсем алла илме ыйтнине, производствăна çĕнĕ технологисем кĕртме хавхалантарнине пурсăмăр та курса тăратпăр. Мĕн тетĕр эсир? Пăр тапранчĕ, çанă тавăрса ĕçе кӳлĕннисен продуктивлăхĕ ӳсрĕ. Анчах та кун йĕркинче темĕнле проект-программа пулсан та конкретлă ĕçлекен ăсталăхĕ малти вырăнта тăрать. Вăл çапла пулнă, пур, пулĕ те. Çакна асра тытса тата обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче чунне парса ĕçлекенсен мал туртăмлăхне аталану çулĕ çинче пурнăçпа тан илсе пырас тĕллевпе район администрацийĕ çулленех пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи выльăх-чĕрлĕх пăхакансем хушшинче экономика ăмăртăвĕ ирттерет. Кăçал та çак ырă пуçару кун йĕркинчен тухса ӳкмерĕ. Пĕлсе йĕркеленĕ ăмăрту производство кăтартăвĕсене çаврăнчĕ.

2010 çулта районти пĕтĕм категориллĕ хуçалăхсенче 6196 тонна аш-какай туса илнĕ е, виçĕм çулхипе танлаштарсан, 98,6 процент. Сĕт производстви 44 пин те 252 тоннăпа танлашнă – 100,1 процент. Усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне хуçалăхсем 46,1 центнер аш-какай, 288,4 центнер сĕт туса илнĕ. Ку кăтартусем 2009 çулхипе танлаштарсан 98 процент тата 97,9 процент пулаççĕ. Чăх-чĕп фабрики вара çăмарта туса илессине 1,8 процент ӳстернĕ: кашни чăхран çулталăкне вăтамран 330 çăмарта илнĕ.

Çулсерен «Оринино», Суворов яч. хис., Ильич яч. хис., «Герой», «Свобода», «Ударник», «Восток» хуçалăхсен ĕçченĕсем аш-какай, сĕт туса илессипе япăх мар ĕçлесе пыраççĕ. Çак хуçалăхсенче усă куракан 100 гектар çĕр пуçне 61–207 центнер аш-какай, 326–1432 центнер сĕт туса илме мехел çитернĕ.

Ял хуçалăх предприятийĕсенче паянхи куна 5321 пуç măйракаллă шултра выльăх (вăл шутра 2156 пуç сумалли ĕнесем), 7688 пуç сыснасем шутланаççĕ пулсан килти хушма хуçалăхсенче 10428 пуç măйракаллă шултра выльăх (7415 пуçĕ ĕнесем), 2121 пуç сыснасем шутланаççĕ.

Самăртма хупнă măйракаллă шултра выльăхсем пĕлтĕр талăкра вăтамран 506 грамм, сыснасем 307 грамм ӳт хушнă пулсан măйракаллă шултра выльăхсен ӳт хушаслăхĕ Чкалов яч. хис. хуçалăхра 615 грампа, «Свобода» хуçалăхра 610 грампа танлашнă. Уйрăммăн илсен самăртма хупнă вăкăрсем «Свобода» хуçалăхра талăксерен 976 грамм ӳт хушнă. Самăртма хупнă сыснасем «Ударник» хуçалăхра талăксерен 518 грамм, «Геройра» 540 грамм ӳт хушнă.

Районĕпе пĕлтĕр 100 ĕне пуçне 83 пăру (унчченхи çулхинчен 5 пăру ытларах) илнĕ. Кунта Суворов яч. хис., Ильич яч. хис., Чкалов яч. хис. хуçалăхсен специалисчĕсене ырăпа асăнса хăвармалла.

Хуçалăхсем хушшинче сĕт сăвассине илес пулсан маттуррисен шутĕнче Суворов яч. хис. хуçалăха палăртмалла. Пĕлтĕр вĕсем 1161 тонна сĕт туса илчĕç (унченхи çулхин 112 процентчĕ). Кашни ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăма 2009 çулхинчен 642 килограмм ӳстерсе ĕне пуçне тивекен вăтам кăтартăва хуçалăх 5805 килограма çитерчĕ.

Татăклă улшăнусем тума вăхăт çитнине ăнланнисем фермăсенчи производство оборудованине тĕпрен улăштарассипе тимлеççĕ. Пĕлтĕр кĕркунне «Оринино» хуçалăхра, иртнĕ уйăхра «Свободăра» çĕнĕ сĕт пăрăхĕсемпе холодильниксем вырнаçтарчĕç. «Передовик» хуçалăхăн Ахманери ĕне ферминче 200 пуç сумалли ĕне вырнаçакан сарай реконструкци хыççăн ĕçлеме пуçларĕ. Çакнашкал çĕнĕлĕхсем малашне ытларах пуласса шанас килет.

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов «Свобода» хуçалăхăн тĕп зоотехникне Э. Замятинăна тухăçлă ĕçшĕн саламланă самант.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Объявления

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения»:**

**- с кадастровым номером 21:17:030101:137, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, для садоводства, площадью 592 кв.м.;**

**- с кадастровым номером 21:17:030101:136, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, для садоводства, площадью 706 кв.м.;**

**- с кадастровым номером 21:17:030101:140, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, для садоводства, площадью 595кв.м.;**

**-с кадастровым номером 21:17:030101:138, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, для садоводства, площадью 735 кв.м.;**

**- с кадастровым номером 21:17:030101:139, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, для садоводства, площадью 697 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:270303:53, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Нижние Панклеи, ул. Восточная, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 940 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

# Чи лайăххисем – производство паттăрĕсем

## Ĕçре палăрнисем

***Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнче «Районта 2010 çулта выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче ĕçлекенсем хушшинче ирттернĕ экономика ăмăртăвĕн кăтартăвĕсем çинчен» йышăну çине алă пусрĕ. Çулталăк хушши выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче тăрăшса вăй хунă ĕçченсемшĕн – кĕтнĕ самант. Çак кĕрешӳре кашниех çĕнтерме тăрăшрĕ пулсан та чыса чи хастаррисем кăна тивĕçрĕç.***

**1. 2010 çул кăтартăвĕсемпе экономика ăмăртăвĕнче çаксем çĕнтернĕ тесе шутлас тата вĕсене парнесем парас:**

– Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕ çирĕплетнĕ **1-мĕш степеньлĕ диплома тата куçса çӳрекен «2010 çулхи чи лайăх сĕт ферми» вымпелпа 5 пин тенкĕ укçан парнене** Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн Анаткассинчи сĕт фермине парас (ферма заведующийĕ Викентий Викентиевич Николаев). Ферма коллективĕ çулталăк хушшинче пĕтĕмпе 1161,1 тонна е пĕр ĕне пуçне вăтамран 5805 килограмм сĕт сунă;

– Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕ çирĕплетнĕ **1-мĕш степеньлĕ диплома тата куçса çӳрекен «2010 çулхи măйракаллă шултра выльăхсен чи лайăх ферми» вымпелпа 5 пин тенкĕ укçан парнене** ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ-заводăн Йӳтĕркассинчи măйракаллă шултра выльăх фермине парас (комплекслă бригада заведующийĕ Григорий Геннадьевич Белов). Йӳтĕркассисем çулталăк хушшинче выльăхсене талăксерен вăтамран 972 грамм ӳт хуштарса пурĕ 25,3 тонна аш-какай туса илнĕ;

– Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕ çирĕплетнĕ **1-мĕш степеньлĕ диплома тата куçса çӳрекен «2010 çулхи чи лайăх сысна ферми» вымпелпа 5 пин тенкĕ укçан парнене** ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ-заводăн Кашмашри сысна фермине парас (ферма заведующийĕ Виталий Васильевич Никитин). Кашмашсем çулталăк хушшинче пурĕ 3717 пуç çура, кашни 100 тĕп сысна ами пуçне 1824 пуç çура илнĕ. Вĕсем сыснасене талăксерен вăтамран 352 грамм ӳт хуштарса аш туса илессине 100,6 тоннăна çитернĕ.

– Пĕр ĕне пуçне 5 пин килограмран пуçласа 6 пин килограмм таран сĕт сунă çак дояркăсене Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн **дипломĕсемпе тата 1200-шер тенкĕ укçан парнесем парас**:

| | |
|---|---|
| **Суворов яч. хис.:** | |
| Филиппова Татьяна Николаевна | 5647 кг |
| Орлова Надежда Николаевна | 5443 кг |
| Иванова Галина Александровна | 5280 кг |
| Михайлова Надежда Валентиновна | 5236 кг |
| Печкова Валентина Николаевна | 5071 кг |
| **«Ударник»:** | |
| Васильева Лидия Ивановна | 5361 кг |
| Хмелева Зоя Валериановна | 5361 кг |
| Димитриева Валентина Алексеевна | 5095 кг |
| Семенова Наталья Николаевна | 5095 кг |
| Алексеева Лидия Петровна | 5089 кг |
| Иванова Зоя Геннадьевна | 5089 кг |

– Пĕр ĕне пуçне 6 пин килограмран ирттерсе сĕт сунă çак дояркăсене Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн дипломĕсемпе тата 1600-шер тенкĕ укçан парнесем парас:

| | |
|---|---|
| **Суворов яч. хис.:** | |
| Журавлева Надежда Евгеньевна | 6702 кг |
| Антонова Фаина Юрьевна | 6702 кг |
| Макарова Валентина Валерьяновна | 6393 кг |
| **«Ударник»:** | |
| Андреева Зоя Степановна | 6732 кг |
| Михайлова Зоя Ивановна | 6347 кг |

– Пĕр ĕне пуçне 7 пин килограмран ирттерсе сĕт сунă çак дояркăсене Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн дипломĕсемпе тата 2000-шер тенкĕ укçан парнесем парас:

**«Ударник»**

Трофимова Валентина Германовна 7022 кг

**2. Ял хуçалăх производствинчи пысăк производство ӳсĕмĕсемшĕн çĕнтерӳçĕ ятне парса ятарлă хăюпа, Муркаш район администрацийĕпе агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн дипломĕпе тата 1000 тенкĕ укçан парнепе çаксене наградăлас:**

2.1 **Надежда Евгеньевна ЖУРАВЛЕВĂПА Фаина Юрьевна АНТОНОВĂНА** – Суворов яч. хис. хуçалăхĕн ĕнесене машинăпа сăвакан операторĕсене – «2010 çулта ĕнесене машинăпа сăвас ĕçри чи лайăх оператор» ят парас. Вĕсем хăйсен ушкăнĕнчи кашни ĕнерен пĕлтĕр 6702 кг сĕт сунă, 100 ĕне пуçне 100 пăру илнĕ, вĕсене 100 процент упраса хăварнă;

2.2 **Фаина Николаевна МАКСИМОВĂНА** – Суворов яч. хис. хуçалăхри техник-осеменатора çулталăкра 100 ĕне пуçне 92 пăру илнĕшĕн – «2010 çулхи чи лайăх техник-осеменатор» ят парас;

2.3 **Олег Димитриевич МАКАРОВА** – «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» уçă акционерлă обществăн тĕп зоотехникне – «2010 çулхи чи лайăх зоотехник» ят парас. Çак ята ăна чăх-чĕп отраслĕнче çĕнĕ технологисемпе малта пыракан опыта пурнăça кĕртнĕшĕн, чăх-чĕп йышне 29 процент ӳстернĕшĕн, пĕр чăх пуçне çулталăкра 330 штук çăмарта илсе çулталăкри производствăна 58 миллион штука çитернĕшĕн памалла тунă;

2.4 **Людмила Петровна ПЛАТОНОВĂНА** – «Ударник» хуçалăхăн тĕп ветврачне, Йӳçкасси ветеринари участокĕн заведующине – «2010 çулхи районти чи лайăх ветеринари ĕçченĕ» ят парас. Çирĕплетнĕ хуçалăхри ветсанитари ĕçĕсене вăхăтра тата пахалăхлă туса пынăшăн;

2.5 **Андриан Валерианович ПЕТРОВА** – «Ударник» хуçалăхри Йӳçкассинчи сĕт фермин заведующине – «2010 çулхи чи лайăх ферма заведующийĕ» ят парас. Вăл выльăхсене апатлантарас тата пăхас çĕрте малта пыракан технологисемпе анлă усă курса пĕтĕмĕшле сĕт сăвассине 18,8 процент ӳстернĕ. Фермипе пĕр ĕне пуçне 4093 килограмм сĕт суса пĕтĕмĕшле кăтартăва 1234,9 тоннăна çитернĕ. Кунта самăртма тăратнă выльăхсем талăксерен вăтамран 660 грамм ӳт хушнă;

2.6 **Людмила Ивановна СТЕПАНОВĂНА** – «Ударник» хуçалăхри сысна пăхакан оператора – «2010 çулта сысна самăртассипе чи лайăх оператор» ят парас. Унăн сыснисем талăксерен вăтамран 559 грамм ӳт хушса хуçалăха 16,8 тонна аш туса панă;

2.7 **Владислав Арефьевич ДЕДОВА** – ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн măйракаллă шултра выльăх самăртакан операторне – «2010 çулта măйракаллă шултра выльăх самăртакан чи лайăх оператор» ят парас. Вăл пăхакан măйракаллă шултра выльăхсем талăксерен вăтамран 972 грамм ӳт хушнă, хуçалăха 25,3 тонна аш туса панă;

2.8 **Елена Владимировна ПУШКИНĂНА** – «Восток» хуçалăхри пăру пăхакана – «2010 çулхи чи лайăх пăру пăхакан» ят парас. Вăл пăхакан пăрусем çулталăк хушшинче талăксерен 717 грамм ӳт хушса хуçалăха 18,2 тонна аш туса панă;

2.9. **Галина Александровна ПЕТРОВĂНА** – ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн сысна пăхаканне – «2010 çулта сысна çурисем илессин чи лайăх операторĕ» ят парас. Вăл çулталăк хушшинче çурасем илессине 68 процент ӳстернĕ, кашни тĕп сысна аминчен 22,7 çура илсе пĕтĕмĕшле кăтартăва 803 çурана çитерме пултарнă;

2.10. **Роза Евгеньевна КРАСНОВĂНА** – «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» уçă акционерлă обществăн чăх-чĕп пăхаканне – «2010 çулхи чи лайăх чăх-чĕп операторĕ» ят парас. 12 пин чăх пăхакан ĕçчен кашни чăхран 331 штук çăмарта илсе пĕтĕмĕшле кăтартăва 3,8 миллион штука çитернĕ.

3. Экономика ăмăртăвĕн условийĕсене пурнăçламаннипе «2010 çулхи чи лайăх утарçă» ят никама та парас мар.

# Ӳсĕр водитель – инкек сăлтавĕ

**Район судĕнче**

Çул-йĕр çинчи инкексем юлашки вунă çулта уйрăмах нумайланни, паллах, транспорт хатĕрĕсем çулсеренех йышланса пынипе те çыхăннă. Водительсемпе çуран çӳрекенсене çул-йĕр çинчи йĕркене пăснăшăн административлă майпа явап тыттарассине Раççей Федерацийĕн административлă нормисене пăснин кодексĕн 12 сыпăкĕнче çырса панă.

Çак пайăн 12.24 статйи çинче вара тĕплĕнрех чарăнса тăрас килет. Ăна чи пĕлтерĕшли теме пулать. Мĕншĕн тесен вăл çын сывлăхне сиен кӳнипе çыхăннă.

Статьян пĕрремĕш пайĕнче çул-йĕр çинчи йĕркене е транспорт хатĕрĕпе усă курмалли йĕркене пăснипе çыннăн сывлăхне çăмăл сиен кӳнĕшĕн водителе 1000-1500 тенкĕ штраф пама е çулталăкран пуçласа çулталăк çурăччен транспорт хатĕрĕпе çӳрессинчен хăтарма право пуррине палăртнă.

Çыннăн сывлăхне çăмăл сиен кӳни, тепĕр майлă каласан, унăн сывлăхне кĕске вăхăтлăха хавшатни тата çакна пула вăл вăхăтлăх ĕçлеме пултарайманнипе танлашать.

Статьян иккĕмĕш пайĕнче çыннăн сывлăхне вăтам сиен кӳни пирки сăмах пырать. Çакăн пек чухне вара наказани 2000-2500 тенкĕ штрафпа е çулталăк çурăран пуçласа икĕ çулччен транспорт хатĕрĕпе çӳрессинчен хăтарассипе çыхăннă.

Çыннăн сывлăхне вăтам сиен кӳнĕ пулсан сывлăха çирĕплетме вăрах вăхăт кирлĕ, унăн пĕтĕмĕшле ĕçлеслĕхĕ те самаях чакать.

Çакна тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парас килет. Акă районти судра çӳлерех асăннă статьяпа çыхăннă ĕçсене иртнĕ çулта та, унччен малтанхинче те 7-шер пăхса тухнă. Пĕлтĕр çак ĕçсем тăрăх 5 çынна явап тыттарнă.

Çул-йĕр правилисене е транспорт хатĕрĕпе усă курмалли йĕркене пăснă вăхăтра водительсенчен чылайăшĕ ӳсĕрле руль умне ларни çинче тухать. Пĕлтĕр тишкернĕ ĕçех тĕслĕх вырăнне илме пултаратпăр. Июлĕн 2-мĕшĕнче Мускав – Уфа автоçулăн 612 çухрăмĕнче, пирĕн район территорийĕнче, Пелагеев (хушаматне улăштарнă) хăйĕн автомашинине «тытса чараймасть», çул çинчех «сухалса каять». Машинăна çул хĕррине çеç чарма пултарать. Юнашар ларакан сывлăхне çăмăл сиен кӳрет. Айăпĕ вара – водитель ӳсĕр пулнинче.

Нумай чухне аварисен сăлтавĕ водительсем палăртнинчен пысăкрах хăвăртлăхпа çӳренинче те. Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче трассăн 613-мĕш çухрăмĕнче КамАЗ водителĕ çак сăлтавпах хирĕç килекен машинăсен речĕ çине тухса каять, çăмăл машинăна çапăнать. Аварире çăмăл машина водителĕн сывлăхне вăтам сиен кӳнипе палăртаççĕ.

Çак икĕ тĕслĕхре айăплă водительсене иккĕшне те транспортпа çӳрессинчен хăтарнă. Юрать-ха çул çинчи инкексем çынсен сывлăхне сиен кӳнипе çеç вĕçленнĕ. Хăрушăрах та пулма пултарнă вĕт?

**С. ТРИХАЛКИН,**
**Муркаш район сучĕн судйи.**

**Шкулсенчен хыпарлаççĕ**

# Уйăхлăх пуриншĕн те усăллă иртрĕ

Оборонăллă-массăллă ĕçсен тата спорт уйăхлăхĕ вĕçленчĕ. Кашни шкултах ăна ачасемшĕн усăллă ирттерме тăрăшрĕç. Муркашри вăтам шкулта та кашни кун тенĕ пекех тĕрлĕ енлĕ конкурссем, ăмăртусем, викторинăсем иртрĕç. Шкул директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Е. Ефанова, Э. Яковлева тата О. Минаева аслă вожатăйсем, вĕсемпе пĕрле класс ертӳçисем те чылай тăрăшрĕç.

Акă уйăхлăхăн пĕрремĕш кунĕнчех шкул тирĕнче 10 тата 11-мĕш классенче вĕренекенсем хушшинче пăшалтан тĕл перессипе ăмăрту иртрĕ. Хыççăнах ку енĕпе 8–9-мĕш классенче вĕренекенсем те вăй виçрĕç. Интереслĕ ăмăртура хĕр ачасем те каччăсемпе танах ăмăртрĕç.

Йĕлтĕр çине вара шкулĕпех тăтăмăр. Ачасем тĕрлĕ çулсенче çуралнине шута илсе ăмăртнă классен командисем çитĕнӳ пурте пĕрле тăрăшсан çеç пулнине аван ăнланса илчĕç. 4 «в», 5 «б», 8 «в» тата 11 «а» классем çĕнтерӳçĕсен ятне çĕнсе илчĕç. Уйăхлăх вăхăтĕнче ăмăртусем спортăн тĕрлĕ енĕпе иртрĕç: волейбол, пионербол, «хаваслă стартсем», теннис тата ытти те. Теннисра, сăмахран, 8 «в» класра вĕренекен А. Харьков, А. Тодинов, С. Иванова малтисен ретĕнче пулчĕç. Пионерболра 6 «а» класра вĕренекенсем хастарлăх кăтартрĕç. Кĕçĕн классен хăйсене юмахлă хаваслă стартсенче тĕрĕслерĕç.

Ăс-тăн аталанăвĕ пирки те манмарăмăр. Акă тĕрлĕ конкурссенчен тăракан ăмăртăва 8-мĕш классем хушшинче ирттертĕмĕр. Кунта ачасем хăйсене географи, математика, биологи, хими, физика, литература енĕпе те тĕрĕслеме пултарчĕç. Л. Волкова ертсе пыракан 8 «а» класс çĕнтерчĕ.

«Эпĕ юрататăп сана, Тăван çĕр-шыв» патриот юррисен конкурсĕ хăйне май сумлăхла палăрса асра юлчĕ. Виçĕ ӳсĕмре иртнĕ конкурсра жюри 6 «б» тата 8 «в» классем лайăх хатĕрленнине палăртрĕ. Шкулта мала тухнă уйрăм «юрăçсем» вара район шайĕнчи конкурсра шкул ятне ямарĕç, малти вырăнсене йышăнма пултарчĕç.

Уйăхлăха вĕçлекен пысăк мероприяти – 9–11 классенче вĕренекенсен спартакиади – ӳт-пӳ енĕпе те, ăс-тăн енĕпе те пултаруллисене палăртма май пачĕ. Командăсем хушшинче 10 «а» класс çĕнтерчĕ. Уйăммăн вара çав класра вĕренекен Егор Ярухина тата 11 «а» класра вĕренекен Анна Миронована палăртрĕç.

Çак вăхăтра шкулта вĕренекенсем патĕнче хăнара Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине, Афганистанри тата Чечен Республикинчи хĕрӳ çапăçусене хутшăннисем те пĕрре мар пулчĕç. Çурлатринче пурăнакан Валерий Геннадьевич Максимов 8 «в» класшăн кĕтнĕ хăна пулчĕ. 1983 çулта Кабула лекнĕскер «За боевые заслуги» медалье мĕншĕн тивĕçнине те каласа пачĕ. Халĕ вара вăл Шупашкарта ĕçлет. Çак паттăрпа йĕркеленĕ тĕл пулу уйрăмах арçын ачасемшĕн интереслĕ пулчĕ. Тĕрлĕ мероприятипе пуян уйăхлăхра саккăрмĕшсен «дневникĕнче» унăн вырăнĕ пысăк пулни ачасен калаçăвĕнчен те палăрчĕ.

**Е. ВАРЛАМОВА,**
**8 «в» класс ертӳçи.**

**Спорт**

# А. Быкова асăнса

Спорта юратакансене Çатракассинчи вăтам шкулта мартăн 7-мĕшĕнче йыхравлаççĕ. Çак кун Хуракасси выççăлккинче çуралса ӳснĕ, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ пулса тăнă Александр Быков ячĕпе спартакиада иртет. Герой ячĕпе тăванĕсем куçса çӳрекен кубок çирĕплетнĕ, «Свобода» хуçалăх та ăмăртура мала тухакансем валли хăйĕн парнисене хатĕрленĕ. Шăпах çавсене çĕнсе илессишĕн волейбол вăййисем иртеççĕ тата йĕлтĕрçĕсен эстафети пулать.

Волейболла выляксен командинче 3 хĕрарăм тата 3 арçын пулмалла, 18 çултан иртнисем. Эстафетăра – 2 хĕрарăм тата 2 арçын. Пĕрремĕш тапхăрта 18-35 çулхи хĕрарăм, иккĕмĕш тапхăрта 35 çултан иртнĕ арçын, виççĕмĕш тапхăрта 35 çултан иртнĕ хĕрарăм, тăваттăмĕш тапхăрта 18-35 çулсенчи арçын ăмăртмалла.

Ăмăртусем Çатракассинчи вăтам шкулта 10 сехетре пуçланаççĕ.

**Редакци почтинчен**

# Уявра савăнтăмăр

Çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунне халалласа Мăн Токшик ялĕнче йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне йĕркелерĕç. Унта Турай ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.Н. Павлов хутшăнса пухăннисене саламларĕ. Ăмăртăва ертсе пыраканĕсем çак ялта çуралса ӳснĕ педагог ветеран В. Терентьев тата кунти клуб ертӳçи А. Федоров пулчĕç. Ăмăртура ял çамрăкĕсем хушшинче Алексей Березова çитекенни пулмарĕ. Аслă çулхи арçынсенчен районти шалти ĕçсен пайĕнче вăй хуракан Виталий Березов чи маттурри пулчĕ. Ачасем те старта йышлăн тухрĕç. Çĕнтерӳçĕ ятне чи вăйлисем – Владимир Кулаков, Кирилл Чермаков, Надежда Федорова тата Ирина Портнова – тивĕçрĕç. Уява хутшăннă йĕлтĕрçĕсемпе куракансем те кăмăллă юлчĕç.

**Ю. ЕВСТАФЬЕВА,**
**Тойкилтĕри тĕп шкул вĕрентекенĕ.**

# Спортпа туслисем

Сывлăхлă пулас тесен пирĕн спортпа туслă пулмалла. Ярапайкасси ял тăрăхĕнче пурăнакансем те çакна лайăх ăнланаççĕ. Кашни çулах тĕрлĕ ăмăртусем, спартакиадăсем ирттереççĕ. Нумаях пулмасть ял тăрăхĕн тата Ярапайкассинчи вăтам шкул администрацийĕсем йĕркеленипе кунта волейболла вылякансен спартакиади пулчĕ. Ăна Çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунне халалларĕç.

Пĕтĕмпе ултă команда пухăнчĕ шкулти спортзала: Итакачкассинчен икĕ команда (çамрăксем тата аслăраххисем), Ярапайкассисем, Çамрăксен урамĕнчисем, Милютакасси команди, Ермак тата Шурча ялĕнчисем. Командăсем волейболла вылярĕç кăна мар, шашкăпа шахмат вăййисенче те, вĕрен туртассинче те вăй виçрĕç. Ытти тĕрлĕ вăйăсем те иртрĕç. Мала тухнисене чысласа ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе В. Голубевпа шкул директорĕ Н. Кудряшов арçынсен уявне интереслĕ ирттерме пулăшнăшăн пухăннисене ырласа мухтарĕç, саламларĕç. Уяв чăннипех те хаваслă иртрĕ.

**Н. ГРИГОРЬЕВ.**

# Мăшăрăма пулăшнăшăн тав

Хĕллехи сивĕ кунсем пире, ватăсене, часах «асăрхаççĕ», ураран та ӳкереççĕ. Пĕр каçхине, манăн мăшăр Николай Петрович чирлесе ӳкрĕ. Ним тума та пĕлеймесĕр пускиле кайрăм. Лена килсе унăн юн пусăмне виçсе пăхрĕ те вăл пĕчĕк пулнине пĕлтерчĕ. Васкавлă пулăшу ыйтса шăнкăравларĕ. Ватă çынна пулăшма тепĕр 10-15 минутранах шур халатлисем çитрĕç. Мăшăра кирлĕ пулăшу пачĕç.

Мăшăрăма пулăшнăшăн медицина ĕçченĕсене район хаçачĕ урлă пысăк тав сăмахĕ калас килет. Сире, ырă çыннăмăрсене – Владимир Васильев фельдшера тата хăвăрт илсе çитернĕ Аркадий Герасимов водителе – хăвăра та сывлăх сунатăп. Тавах. Хамăрăн пускиле Хуракасси выççăлккинчи лавккара ĕçлекен Елена Алжирова сутуçăна та тав тăватăп.

**П. СТЕПАНОВА.**

**Пирĕн çамрăксем**

# Муркашсен ятне яман

Февралĕн 26-мĕшĕнче Çĕмĕрле хулинче çамрăк армеецсен тата çарпа патриот клубĕсен республика фестивалĕ иртрĕ. Çак фестивальте пирĕн район чысне Чуманкассинчи вăтам шкулта йĕркеленнĕ Г. Алексеев ячĕллĕ çарпа патриот клубĕ хӳтĕлерĕ.

Ю.А. Артемьев вĕрентекен ертсе пынипе виçĕ пысăк тапхăртан тăракан конкурс блокĕсенче çамрăксем хăйсене лайăх енчен кăтартма пултарчĕç. Патриот юррисен конкурсĕнче Муркаш енĕн яшĕсемпе хĕрĕсем виççĕмĕш вырăна тухрĕç. Тĕрлĕ енлĕ спорт ăмăртăвĕнче те, интеллектуаллă конкурсра та иккĕмĕшсем пулчĕç. Çамрăк армеецсене саламлатпăр!

**А. ВАСИЛЬЕВА.**

Чуманкассинчи вăтам шкул.

**Ентеше асăнса**

# Йĕлтĕрçĕсен сезон вĕçленмен

Чăваш Республикин чемпионне Ю. Федотова асăнса йĕркеленĕ республикăри йĕлтĕрçĕсен эстафети кăçалхипе 9-мĕш хут иртрĕ. Йăлана кĕнĕ тăрăх вăл Калайкасси шкулĕнче пулчĕ. Асăннă ăмăртăва шкулта вĕренекенсен, учитель коллективĕсен командисем, предприятисемпе организацисен ертӳçисем хутшăнчĕç.

Кăçал та старта йышлăн тухрĕç: республикăри районсемпе хуласенчен çитнĕ йĕлтĕрçĕсем çĕнтерес кăмăлпах килнĕ Калайкассине. Ăмăрту питĕ хаваслă та хĕрӳ пулчĕ. Пурин те хаклă парнесене, дипломсене тивĕçес килчĕ ĕнтĕ. Анчах кашни ăмăртурах чи вăйлисем çĕнтереççĕ. Вĕсем кăçал та кил хуçисем пулчĕç: вăтам ушкăнра та, аслă ушкăнри вĕренекенсем хушшинче те Калайкассинчи шкул ачисен командисем пĕрремĕш вырăна тухма пултарчĕç. Тĕп шкулсен командисем хушшинче чи хастаррисем Кашмашсем пулчĕç.

Ертӳçĕсен ăмăртăвĕ те хаваслă иртрĕ. Хĕрарăмсем хушшинче 1-мĕш вырăна хулари стоматологи поликлиникине ертсе пыракан Елена Федотова тухрĕ. Арçынсем хушшинче финиша Сергей Тасаков пĕрремĕш çитрĕ (Чăваш патшалăх университечĕ).

Чи кĕтнĕ те пăлханулла самант – парнесем парса чыслани – сезон вĕçлениччен татах та çĕнĕ çитĕнӳсем тума хистет.

**Хамăр инф.**

**Усă алăксен кунĕ**

# Аслă шкулсем чĕнеççĕ

Иртнĕ эрнере район администрацийĕн ларусен залне кăçал шкултан вĕренсе тухакансем йышлăн пухăнчĕç. Чăваш патшалăх педагогика университечĕ, Чăваш патшалăх университечĕ тата Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕ вĕсене валли усă алăксен кунне ирттерчĕç. Тĕл пулăва килнĕ виçĕ аслă шкул ĕçченĕсем хăйсем патĕнче хатĕрлекен специальноçсем пирки интереслĕ тĕплĕн каласа пачĕç. Вун пĕрмĕшсен кашнин пиркиех пĕтĕмлетӳ тума май пулчĕ. Специальноçсене суйласа илнĕ чухне паянхи кунпа çеç пурăнмалла мар. Çавăнпа та преподавательсем пĕтĕмĕшле патшалăх экзаменĕсене суйланă чух чи сахал хисеппе çырлахмалла маррине те шута илме сĕнчĕç. Аслă шкулсенче йышăну мĕнле йĕркепе иртни çинчен пĕлтернĕ чухне тĕрлĕ специальноçпа вĕренме кĕмелли пĕлтĕрхи вăтам баллсемпе конкурс çинче те, тĕллевлĕ майпа вĕренме кĕмелли çинче те чарăнса тăчĕç.

Çамрăксем тĕрлĕ буклетсемпе, хаçатсемпе паллашрĕç, студентсен илемлĕ концертне пăхса хавасланчĕç. Умра вара тĕп тĕллев – экзаменсене лайăх тытса шутланă çĕре вĕренме кĕресси.

**Н. НИКОЛАЕВА.**


**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**НО «ФОНД «ВОЗРОЖДЕНИЕ ХРАМОВ»**

**Продает настенные православные календари (формат А-3, св. Николай) от 5 рублей; бесплатное страхование от несчастных случаев на 10 тыс. руб. через страховые компании. Адрес: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 2. Тел.: 8-905-342-11-50. 7-7.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-5.**

* * *

**Продается однокомнатная квартира, после ремонта, в д. Москакасы. Тел.: 89278642640.**

* * *

**Халăхран питĕ хаклă хакпа чĕрĕ виçепе тата ашăн вăкăрсем, тынасем туянатпăр.Тел.: 89030666461.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру туянатăп.**
**Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 3-5.**


* * *

**Участница долевой собственности Егорова Серафима Федоровна, 23.08.1928 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Ойкасы, ул. Зеленая, д. 49, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Чувашская Республика, Моргаушский район, сельское поселение Большесундырское, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:050801 площадью 2,44 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Большесундырского сельского поселения.**

**2. Егоровой Серафиме Егоровне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Ойкасы, ул. Зеленая, д. 49.**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**

Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.

ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.

Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 02.03.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4329.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.